К-44

„Канаш“ хаҫат ҫумĕнҫе тухать.

КАПКĂН 6-мĕш №

Ҫукăр ҫул ҫинче.

Манăн тус пулсачĕ. Пĕр учрештенире саветуйушчи пулса пурăначĕ. Тӳрĕ ҫын. Пит ырă кăмăллă. Саветуйушчи пулсан та, хуллен пурначĕ. Ҫĕтĕк-ҫатăк тумланса ҫӳретчĕ. Арăмĕн те ытлаши тумтирсем ҫукчĕ. Пĕрре вăл учрештенийе пырат те, писсăрсем калаҫни хăлхине кĕрех кайат:

— Пăхăрха пирĕн саветуйушчийе. Паллах шулĕк вăл.

— Ма вара?

— Мĕнле ма? Йурийех ҫĕтĕк-ҫатăк тумтирсемпе ҫӳрет. Уйăхне пиншер тенкĕ хăйĕн кăсйине чикнине систересшĕн мар. Паллах ĕнтĕ, саветуйушчи! Саветуйушчи ҫавна илтет те, шухăша кайат:

— Мĕн шайтаншăн ҫĕтĕк ҫатăк ҫӳретĕпха. Тĕрĕс пурăннине никам та ĕненмест. Пурĕпĕр. Тумланса лартам ĕлĕкхи хуҫасем пек.

Саветуйушчи учрештениреп ҫуран таврăнат.

— Пăхăрха, шулĕкла ҫын карĕ. Тумтирĕнчен пăхсан саветуйушчи, хăй ҫуранах ҫӳрет. Килĕнче темитсе лаша кĕҫенсе тăраҫҫĕ пуҫ. Ҫуран ҫӳресен епĕ шулĕкне пĕлеймĕҫ тет пуҫ, теҫҫĕ.

— Чăвах та, тет саветуйушчи.—Учрештенире лашасем пур. Йамшăк тытас. Пурĕпĕр тиркеҫҫĕ ĕненмеҫҫĕ.

Саветуйушчи текех ĕнтĕ ҫуран ҫӳремест. Йамшăкĕ Хĕрлĕ плошчăт урлă шит!-шăхăрса анчах иртсе кайат.

* * *

Шалтан шаларах. Саветуйушчин хваттерĕ начар. Пĕчĕк, шăршлă пӳлĕмре ҫеҫ пурăнат. Сивĕ, нӳрĕ, тĕттĕм... Тухат пĕрре пӳртумне сăмавар лартма, кӳршĕри майрасем пăшăлтатаҫҫĕ:

— Пăхха, тăхлачă, укҫи ҫĕрсе вырта пуҫ, ҫапах та ҫавăн пек пĕчĕк пӳлĕмре пурăнат, тарҫă та тытмаст, пит хăлин!

Саветуйушчи кӳренсе карĕ. 6 пӳлĕмлĕ хваттер йышăнчĕ. Неҫкă, стрепкă, тата кĕпе ҫăвакан тытрĕ. Ковйорсем туйанчĕ. Вăрмар хапрĕкĕнчен сăн курнакан пукансем туйанчĕ...

* * *

Еҫҫыннисенчен уйрăмрах пурăннă пулсан та, пирĕн саветуйушчи аванха. Каҫ пулат те ир пулат. Вăхăт иртет. Сасартăк саветуйушчи ҫтена хаҫачĕ ҫинче хăйĕн ҫинчен ҫырнине курах парат.

„Ăҫтан пирĕн саветуйушчин ҫавăн пек паха тумтирсем? Шалу ҫинче пурăнсах ҫавăн пек чаплă пурăнаймăн. 5 шалу та ҫитес ҫук апла пурăнма. Вҫаткăсем нумай илет пулмалла“.

Саветуйушчи каллех шухăша кайат: „Чăнах та. Халичен вҫаткă илмен, ҫапах ĕненмеҫҫĕ, мурсем“

Вҫаткă илме тапратат.

* * *

Уйăх пурнат вҫаткă илсе, ик уйăх... Йĕри-тавра тĕрлĕрен калаҫусем. Вҫаткă илекенсене тытмалла, теҫҫĕ. Хаҫатсем ҫинче те вҫаткă илекенсемпе вăйлăн кĕрешмелле тесе ҫыраҫҫĕ.

— Мана тытмаҫҫĕҫке, тет хăйхи саветуйушчи.

Ҫапла шухăшласа илнĕ илменех опыскăпа килеҫҫĕ. Саветуйушчийе тĕрмене илсе кайаҫҫĕ.

Ăна йертсе кайакан салтаксем шашкисене ҫурта пек тытса пыраҫҫĕ. Пĕр карчăк ҫавна курсан ӳлесе йачĕ:— „Ох-ах, подшевиксем-антихриссем! Каллех айăпсăр ҫынна тĕрмене илсе кайаҫҫĕ, ҫĕр ҫăтмансем“.

— Ҫĕр ҫулхи кăмпа, тет ҫилленсе саветуйушчи,—мĕн сĕлехӳсене йухтаран. Кирек-хăҫан та есĕр тӳнтер майлă калаҫаттăр. Сире пула тĕрмене лекрĕм.

Лăч! сурчĕ те утрĕ тĕрменелле.

„Капкăн“ таппи

„Мăйракалли илĕртрĕ“.

Ĕлĕк пĕр светтуйран ыйтнă:

— Мĕншĕн есĕ çын арăмпе аскăн ĕç турăн?—тенĕ.

— Шуйтан илĕртрĕ, тенĕ хирĕç светтуй.

Шуйтан копператтивсенче ĕçлекенсене «илĕртме» йуратаĭ пулмалла.

Ав, Елмен-Сунарти (Уравăш вул.) кивсĕн паракан йулташлăх лапкинче 28 тенкĕ те 16 пус укçа тухайман. Ревисорсем:

— Ăçта кайнă сирĕн укçа, тесе ыйтсан, пĕр членĕ:

— Мăйракалли илĕртрĕ, тенĕ.

Шуйтансем çук тетпĕр епĕр. Кооператтив членĕсем пурах теççĕ.

Çĕр сум укçу пуличен çĕр тусу пултăр

Кашкăр çыраĭ:

Нурăсри фининçпектăр (Йетĕрне у.) хăйĕн хваттер хуçине,—Петров пупа, налокран хăтарнă, тет.

Петров пуп сăвапла фининçпектăра çӳлти патшалăха кӳртме пулнă пуĵ, Капкăн хуçи тата ăна сута парасшăн,—пур йенчен те ырăлăх.

Амĕш сĕчĕпе кĕменни, качака сĕчĕпе кĕрес çук.

Темйан Петнăйăн пĕр стихотворенинче пĕр сысна калаĭ: тупнă хаçат вулама... Мĕн пур унта? Пурин çинчен те çырмаççĕ хаçатра, ак калăпăр, унта мăшкăлтăк шыв çинчен пĕр сăмах та каламан, тет.

Çавăн пек çынсем Чăваш рапфакĕнче те пур тем. Преникăв й. Тăвай вулăсĕнчен çыраĭ:

Хветĕр Йефимăв, хăй Чăваш рапфакĕнче вĕренет пулин те: «Канашра» мана кирлĕ йапаласем çинчен çырмаççĕ. Кирлĕ мар мана «Канаш» хаçат, тет.

Тĕшмĕш.

Çунат çыраĭ:

«Сире пĕр тĕлĕк пĕлтерем. Кайнă пек епĕ вăрмана, утатăп пек çулпала, хăртнă хĕрне тухнă пек. Унта пĕр самăр кайăк мана сăхасшăн пек. Хытă хăранипе чĕтресе вăранса карăм. Мĕне пĕлтеретши ку тĕлĕк»?

Çунат йулташ, Капкăн хуçи тĕлĕксене ăнлантарса пама пултараймасĭ. 60 çулхи карчăксем патне кай, вĕсем ăнлантарса парĕç. Ан тĕшмĕшлен. Тĕшмĕш кутне вĕри шĕшлĕ, теççĕ.

20 пăт туртакан чукмар.

Николай Романăв комсомолĕс çыраĭ:

«Кутăн Михалка комсомолсене кураймасĭ: пĕр комсомол пичĕшĕн ачине йĕке хӳрепе хĕнесе пĕтернĕ; комсомолĕссене хĕнеме 20 пăт туртакан чукмар хатĕрленĕ, тет.

Йумахри Улăп пекех «вăйлă» иккен Кутăн Михалкка. Ĕненме хĕн.

Червонтсă.

Червонтсă тенине такам та пĕлет, ăна чĕрĕ кусĕсем çеç мар, суккăррисем те йуратаççĕ. Анчах пуринчен те ытла Асакассинчи (Йетĕрне у.) копператтив членĕсем ытараймаççĕ. Копператтив укçине хăйсен кăсйисене 76 червонтсă чиксе хунă.

не ҫакланнисем.

«Капкӑна» шултраран шултра експонатсем лексе пыра пуҫларӗҫ.

«Капкӑн» хуҫи тепӗр «тапӑ» лартас терӗ. Тапӑпа ҫамрӑкраххисене—комсомолӗссене тытмалла канаш турӗ вӑл. Ку тапӑ рати хумӗсемпе те ӗҫлет.

— А-и, ӗҫ ӑна та пуҫларӗ. Тапӑ шатлаттарать кӑна. Йӗппине лартса ҫитер!

— Йӑлӑмкас вулӑсӗнчи Хурӑнлӑ-Чӑкӑрти комсомолӗс Кошевнӗккӑв ваттисен кунӗ пуп умӗнче ваттисен кӗнекине тытнӑ—тӑрать. Кӗнеки мӗнӗпех тапӑ айне хӗсӗнчӗ ӳкрӗ. Урисене тапӑлтаттара кӑна выртать.

Кӑна сӗтӗрсе тапӑ нӳхрепне хутӑмӑр... Катил тӗтӗмӗ нӳрӗпе сирӗли? Унчен те пулмарӗ,

— Ҫӗмӗртлӗхре (Турай в.) Унтри Елекҫейӗ 3—4 уйӑх хушши пухнӑ член укҫине тӳрех пуп кӗсйине кайса чикрӗ... Кӗлӗ хыҫҫӑнах «Капкӑнӑн» ратиллӗ таппи ӑна ҫаклатса та илчӗ. Анчах пуплансах кайнӑшӑн пуп картинех ыватрӗ ӑна. Урӑх ҫӗрте те ӗҫ пурха:

— Йӑлӑмкас вулӑсӗнчех Контратйӗв ӗҫкӗпе пиншакне, кӗпине ҫухатнӑ та, уй тӑрӑх чупать. Тапӑри рати хумӗпе ку пиншака вулӑс йамшӑкне парса йатӑмӑр. Контратйӗвӗ часрах «выкӑвӑр» илме йачейкка вӗҫрӗ.

— Сурӑм йалӗнче (Хӗрлӗ Чутай вул.) Танилла Танилли 2—3 ҫул комсомолта тӑнӑскерех таппа ҫакланчӗ. Вӑл ответлӑ ҫекреттар пулнӑ май, авланасшӑн ҫуна пуҫланӑ. Хӗрӗн ашшӗ хӗрне самӑконккӑсӑр сутман. Танилла ҫын сисичен йалта самӑкон ӑстин нӳхрепӗнчен анкарти хыҫӗпе, ҫӗрле четвӗрт йатма нӳме тунӑ. Тӗттӗм чух курӑнмасть, тет пулӗ хӑй ӑшӗнче. Таппа йаланах каҫпа хытӑ ленкеҫҫӗ.

— Ҫав каҫах Иккассинче йачейккӑ пуххи вӑхӑтӗнче Елекҫи Мехвотийӗ туй ҫатанӗ ҫине ларнӑ та:

Туй туй, туй тесен,
Ик-виҫ чалӑш ҫӗкленен...

тесе ҫаварне карать. Ҫӳлелле вӗҫме тӑнӑскерех, тапӑ нӳхреппине персе анчӗ.

Чучу касси ҫекреттарӗ те ҫамӑлланасшӑн. Вӑл хӑй ӑшне «хӗрӳ» сывлӑш тултарнӑ та, ҫапах вӗҫеймест. Ура йавӑр пулӗ тесе, сылтӑм урине салтнӑ. Тӑлисемпе ҫунат тунӑ. Йероплан хӳри вырӑнне ҫӑпатине пиҫиххирен айаларах ҫыхнӑ, туртӑшса, ехлесе чупать... Лексантӑр Иванӑч тӗлӗнче пропеллӗрӗ уринчен ҫапӑннипе тайӑлса анчӗ те, ыйха харлаттарчӗ. Йал йыттисем пухӑннӑ та, хӑсӑк ҫуллаҫҫӗ..

Тапӑ хуҫи ҫӑпата кантринчен туртсах, йытӑсен повӑрне нӳхрепе йачӗ. Нӳхрепӗ тулсах ларчӗ.

«Кушак-кайӑкӗсем» урӑлса ҫитсессӗн, нӳхрепне тасатса, ҫӗнӗ тапӑ лартӑпӑр.

Тапкӑ.

Йалсовечӗсенчи паллӑрах ҫынсем.

Турхан вулӗҫтӑвком членӗ Йермошкӗн турник ҫинче выђаса кӑсйинчен укҫине кӑларса ӳкерсе ҫухатнӑ. Мӗн тӑвас? Йермошкӗн йумӑҫ патне чуптарать. Йумӑҫӗ сар ҫӳҫлӗ комсомолӗс

тупнӑ, тет. Вара Йермошкӗн комсомолӗссене пухать те: парӑр укҫана, тет. Лешсем ним пӗлмесӗр тӗлӗнсе кайаҫҫӗ.

Халӗ Йермошкӗн, укҫине тупаймасӑр хуйхӑрса, хӑй йумӑҫа тухнӑ, тет.

Тӑвай йалсовет ҫекреттарӗ Ҫеменӑв Ваҫҫили пӗр тӑлӑх арӑм патне пырса алӑкне ҫӗмӗрсе кӗнӗ. (Ахӑр пӑртак сыпнӑ пулас). Арӑмӗ аран тарса ӗл-

кӗрнӗ. Малашне Ҫеменӑвӑн, арӑмсем патне ҫӳренӗ чухне, пӗр алла хӗҫ, тепӗр алла пӑшал тытса, хыҫалтан тупӑ сӗтӗрсе пымалла. Вара арӑмсем хурах кӑшкӑрсан та тараймӗҫ.

Пӗчӗк Кӑканар йалсовет членӗ Уртеми Сыссойӗв тӗлӗнӳ туса мухтава тухрӗ. Унтри Лӑриван хӗрӗ Наҫтаҫҫи ача ҫуратса ачине вӗлерсе пытарчӗ. Ҫакна милитсионер сисрӗ те Наҫтаҫҫи патне протоккол ҫырма пычӗ. Наҫтаҫҫине Нурӑс тухтӑрӗ патне, ача ҫуратвине пӗлме, смоттӑра йачӗ. Анчах Наҫтаҫҫи тухтӑр патне кайичен Урте-

ми Сыссойӗв патне кӗрсе тухрӗ. Лешӗ: мӗн ухмахи ху кайма, йар ху вырӑнне ача туман хӗре, терӗ. Наҫтаҫҫи чӑнах ҫапла турӗ. Вара тухтӑр, Наҫтаҫҫи вырӑнне килнӗ хӗре, Наҫтаҫҫи йачӗпе, ача туман, тесе справккӑ парса йанӑ. Ҫапла Уртеми Сыссойӗв канашланипе ача тунӑ Наҫтаҫҫи ача туман пулса тӑчӗ. Мухтав, Сыссойӗва! Йалсовет ӗҫӗсене ӗҫличен — хӗрсем хушшинче ӗҫле. Вара санӑн, Уртеми Сыссойӗв, пӗр пуҫах вырӑнӗнче виҫӗ пуҫах ӳсӗ.

Шупашкар вулӑсӗнче пӗр йалсовет членӗ Пракух Ерхипӗ хӑй пӳрчӗ умӗнче ҫӳрекен выђӑхсене тытса кӗрсе хӳрисене касса йарать. Капла пире выђӑх тухтӑрӗсем те кирлӗ мар. Камӑн

выђӑха кастармалла пур тӳрех Пракух Ерхипӗ патне чуптарӑр. Пракух Ерхипӗ халӗ кусне кусӑлӑх тӑхӑнса профессӑр пекех пулнӑ, тет.

Пӗрремӗш Чемей йалсовет претҫетаттӗлӗ Ҫерок Хветӗрӗ 13 тенкӗ халӑх укҫине картла выђаса йачӗ. Халӗ Хветӗр пиче тӗлӗкре те «ОЧКО», тесе кӑшкӑрать, картла выђаса пуйма шухӑшлать. Ҫак Хветӗре йалсовет претҫе-

таттĕлĕ вырăнне, карт пуçлăхне суйламаллачĕ. Капкăн çапла шутлаť.

Мăн Тукшик йалне Турай вулĕçтăвком претçетаттĕлĕ Ваççилийĕв килчĕ. Пычĕ пухăва. Йуланутпа. Калаççан, калаçсан: акă сире çапла тытатпăр, тĕрĕ чăмăрне кăтартса. Тепĕр хут килсен туйăпа çапса хăратма пăхрĕ. Туйа йуратакан Ваççилийĕва туйапах ан тивгĕрчĕ.

Варасăр йалсовет претçетаттĕлĕ (Карач вулăсĕ) сутуилĕ тукалаť, анчах

тавар хакĕсене пит хаклă илет—махорки 9 пус, шăрпăкĕ 2 пус.

Йўнетме май çукши?

„Ҫапкăн“ мусейĕ.

Ку Асанкасси (Хурамал вул.) йалсовет претçетаттĕлĕн пичечĕ. Ăна вăл вырăнсăр пусса пĕтермест. Çынсем пичет пустарма пырсан, пĕр четвĕрт çуттине ыйтаť,—унсăрăн пуссан пичет палли пулмасť, тет.

Çак ата Асанкассинчи (Хурамал. в.) пуйан Нăшти Паҫукĕн. Ăна вăл патрак Павăла туйа кайма парса унран ĕне пукравчен сĕт çисе пурăнмалла илнĕ. Халĕ икĕ ĕнепе пурнаť, сĕт ĕçсе те пĕтерейместь. Сĕт ĕçме йуратнăран епĕр Паҫука кушак ăратти пулĕ тетпĕр.

Налук списки çырнă чухне.

— Ну, лаша пури сирĕн?

— Лаша?.. лаша çук...

— Ма суйан, аçу тин шыва кўртме кайрĕçке.

— Е-е!... ăна кĕç сутаť вăл.

— Еппин аçу лашапа сутă тăваť пулсан промысловой крахва çине çырса лартап. Вара...

— Е... мĕн... унта сан çыр. Халĕ вăл лашан хучĕ те çук.

— Еппин ăна халех милитси кантурне йарас. Лав пар.

— Тăрха еппин, аттене кайса чĕнем. Атте пĕлет.

Ашшĕ килет.

— Ну, лаша пури сан? паçăр ачу пĕлеймерĕ.

— Тур пулăштăр. Лашине пур тесе çыр. Ĕни те пур, чăххи те пур, кушакки те пур. Пурне те çыр. Милитсийе ан йар тархасшăн.

Сутмалли йумахсем.

Хуч, хуч хучăла, хучăла ҫинче муҥ-чала, муҥчала ҫинче ҫаврашка тени Аслă-Ҫĕрпӳ (Мăрат вул.) йалĕнчи копператтив прегҫетаттĕлĕн «купăста» пуҫне пĕлтерет. Копператтив ваҫҫи илнĕ

700 ҫăмартана вăл ҫырмана кайса тăкнă. Мĕншĕн? Куҫпа мар, темĕскерпе пăхса илнĕ вăл ҫăмартине: хăшĕ ҫĕрĕк, хăшĕ чĕпĕллĕ. Чĕпĕллĕ ҫăмартисене хăйне пусарса кăларттармалла пулнă. 700 ҫăмартаран 14 пин чĕпĕ тухнă пулĕччĕ.

Ту айккинче шăтăк алтăр лараҫ, Икĕ-мĕш Шăнкасра (Тукаш вул.) алсăр Пăликарп пурнаҫ. Аллиҫе вăл ĕссĕрпе амангнă. Халĕ, краштăн вăрҫăченхи инвалит тесе, укҫасăрах паттент илнĕ. Инвалитсене пенҫҫи параҫҫĕ. Йалан ăспа ҫӳрекен «инвалита», пенҫҫи вырăнне штрах тыттарас мари?

Уйăх пур та ҫутти ҫук. Ҫав та пулаҫ. Хумми Карппи йатлă комсомолĕс—Мăн Йавăшсем (Кĕҫĕн Кипек вул. Йет. у.). Вăл комсомолăн ҫуттине (тĕсне) «ҫуттин» кĕленчи ăшне чиксе лартнă: туй-

сенче сăмакунккăпа, сăрапа аташса ҫӳрет. Туй тесен тукмак сикнĕ теҫҫĕ те ваттисем, анчах качака хыҫҫăн кайакан сурăха алтуйи кирлĕ пулмалла.

Пĕр карта сурăх пур. Пĕр лĕпсĕрке упа кĕрĕ те сурăхсене хăвĕ кăларĕ. Мĕнле упа вăл? Ҫавă упа Чату-кассинчи (Чупай вул.) Ҫаманкка Петĕр Кирилли пулаҫ. Унтан йал претҫетаттĕлĕ те, пулăшу комиттет претҫетаттĕлĕ те, йалти сурăхсем те (ҫынсем), — пурте хăраҫҫĕ. Ҫав кулак ҫĕр виҫес тенине илтсен, икĕ ҫул хушшинче 2 ача усрама илнĕ, кайран иккĕшне те хăваласа кăларнă, йулашкинчен хăйĕн тар-

Шӳтсем.

Пурте труках мар.

Пĕр пĕчĕкрех ҫын лаши ҫине утланса ларасшăн пулнă. Пĕр йенчен тс сиксе пăхаҫ, тепĕр йенчен те сикет нийепле те утланса лараймаҫ. Йулашкинчен ҫветтуйсене пулăшма чĕнет:

— Микул турă, пулăш мана!

Сикрĕ. Утланаймарĕ.

— Мăн турă амăшĕ, ҫак ут ҫине утланса ларма пар!

Тăрс! Каллех утланаймарĕ.

— Варвари ҫветтуй, хĕрарăм пулсан та пулăш мана!

Пĕтĕм вăйне пухса тăрс!—сикрĕ те, лаши урлах сиксе каҫса ҫĕре лаплаттарса ӳкрĕ.

— Ну, хăйаматсем! Пурте труках мар,—мĕн кулаттăр ҫынтан, тег хаҫхи ҫын ҫиллене.

Ҫĕрпӳ йармаркинче.

— Сирĕн ҫавасем пирĕн ĕҫре тӳсеймеҫҫĕ...

— Мĕн есĕ? Ун пек лайăх ҫава ниҫта та тупаймăн.

— Пĕлтĕр те сирĕнтенех илтĕм те, ĕҫе тытăнсавах хуҫăлса карĕ.

— Чул ҫине кĕрсе кайса хуҫса пă рахрăн пуҫ?

— Чул мар ҫав. Тарăн ҫырмасемпе ҫаран уйăрнă чухне такама, астăваймастăп, ҫавапа ҫапрăм та, ҫурмаран





ҫи тӳпи ҫӗр касса илнӗ те, тарҫине хӗнесех хӑваласа йанӑ. Тулашӗ тутӑ, шалӗ выҫӑ ҫынӑн ҫаварӗнчен шӑммине туртса кӑлармалла, — пырне лартӗ тата.

„Мухмӑр уҫҫи“ тесе Тивӗшри (Чӑваш-Сурӑм вул.) Лаппи Йаккуне калаҫҫӗ. Кунӗн ҫӗрӗн сӑмакунккӑ йухтарнӑшӑн, ҫав Урӑушкана „мухмӑр уҫҫи“ тесе йат панӑ. Ир те Урӑушка, каҫ та Урӑушка, мӗншӗн Урӑушка пулнӑши? Милитсисен хырӑмне «арпа» пӑсманран пуҙ.

Таса хирте ухмах ташлаӑ, Мӑн-Шахчӑрта Карачӑм Микули аташаӑ. Вӑл кулак, йалсовет претҫетаттӗлӗ. Чухӑнсене хутсем ҫырса панӑшӑн 50 пус илет, пичет пусма пулштух ыйтаӑ, ерехне тата укҫасӑрах ӗҫсе параӑ.

Кӳллине кура кӑвакал чӑмаӑ теҫҫӗ,— йал ҫыннисем айванрах пуҙ ҫав. Ӑсӑрах пулнӑ пулсан, кӑтартӗчӗҫ ӑна мыскара.

Йӑван мучи мыскараҫӑ.

„Кремӗҙ“*).

Ҫӗрпӳри йулташсем шӳт туса, мӑнастире «Кремӗҙ» теҫҫӗ. «Кремӗҙ» мар вӑл, путкӑлӑх вӑл. Ун пек путкӑлӑхран сехрӳ хӑпнипе ҫичӗ ҫухрӑм айакран ҫаврӑнӑн! Йуманка Х.

*) «Кремӗҙ», тесе пысӑк хуласенче чул хӳмесемпе ҫаврӑнӑ вырӑнсене калаҫҫӗ. Вӗсене ӗлӗк йут халӑхсем вӑрҫӑпа тапӑнасран сыхланма чулпа ҫаврӑнӑ. Ун пеккисем Мускаврa та Хусанта та пур.

хуҫӑлса карӗ. Мӗн тӑвас сирӗн ҫавапа йӗркелӗн ҫаран уйӑрма та тӳсеймест.

Шупашкарта.

— Пӗр уйӑх хушшинчех сӑраран 6 тенкӗ тупӑш куртӑм.

— Мӗнле? Сӑрапа сутӑ тума вӗрентӗни мӗн?

— Ҫук. Уйӑхра 150 литр сӑра ӗҫсе йатӑм. Сӑрине Атӑл хӗринчи палаканта илтӗм,—унта ытти сӑра лапкисенчен тӑватӑ пус йӳнерех. 150 литр илсен 6 тенкӗ пулчӗ.

— Кӑшт та ӗҫмен пулсан тупӑш тата нумайрах пулӗчӗ.

— Хула коопсратгивне усӑ парас терӗм тата коопсраттӑр пулас терӗм.

Тӗрӗс каланӑ.

Пӗр прокурортан ыйтнӑ:

— Мӗнле сирӗн шухӑшпа, хӑш кооператтив правлени членӗсем вӑрламасӑр пурӑнаҫҫӗ?

— Тӗрмене лекнисем, тенӗ прокурор.

Шурӑ алӑ.

— Йакку, мӗншӗн сан питӳ хупхура кӑҫал?

— Сӑмакунккӑ хуранӗ кутӗнче ларнӑран мари? Пӗр май тӗтӗм ӑшӗнче...

— Аллусем шурӑске?

— Алли вӑл пӗр майах шыв ӑшӗнче, сӑмакункӑ валашкиче. Шывне пӗр май пӑтратмасан, трупи пӗҫермех тапратаӑ. Ҫавӑнпа алӑ пуп майрисен алли пекех шуралса карӗ.

Таса комиççи.

Вырăссем калаççĕ: пĕр ăс аван, иккĕ пулсан тата лайăх, теççĕ. Анчах çак вырăнлă сăмахсене Йĕпреçри Метиксантрут Сойусăн РК Комиççийĕ çинчен калас пулсан. çапла улăштармалла пек туйăнаť: комиççи членĕсем анкă-минкĕрех, ĕç тума тытăнсан пачах ухмахланса кайаççĕ.

Итлесе пăхар вĕсен пуш уйăхĕн 6-мĕшĕнче пулнă саççетанин проттоколне. Ĕçĕ çапла. Санитаркă (хошалкă) Хмеђова пăртак ашкăнкаланă пулмалла. РКК ăна вырăнтан кăлармалла тăваť. Хăйĕн постановленине йулашкинчен «считать правильным» тесе çыпăçтарса хураť.

Хмеђова вырăнне РКК санитаркăна Еђтепенĕва илме йăшăнаť. Еђтепенĕва пуп майри, çавăнпа та РКК ăна тĕрлĕ йенчен савăрса пăхса илет. Акă ун çинчен йăшăннă постановлени (улăштармасăрах).

> „Принимая во внимание назначение Эльдебеневой организ. порядком т. е. выделение ее кандидатуры была выдвинуто на делегатском женск. собравии, а также она пользуется авторитет. массы и в данный момент (по сведении) она попадьей не является, ввиду того, что она с мужем развелась, а посему последнюю решено оставить на службе, т. к. она больше принесет пользы крестьян. населению и главным образом далеко стоит от разврата“.

Акă йепле «таса хĕр» пек «çветтуй» пуп майри тупнă Метиксантрут РК Комиççийĕ «аскăнчăклă» Хмеђова вырăнне.

Мĕнле çветтуйсем лараççĕши çав комиççинче?

Йулашкинчен «Капкăн» та «по сведении» тесе çакна каласшăн: Еђтепенева пупĕнчен уйăрăлман, хађ те пуппа пĕрлех пурăнаť.

Патман.

Сатачсем.

10. Мăнçутри (Çĕр. в.) пĕр чухăн Çемен Кирилли икĕ ĕне, пĕр качака усраť. Вĕсен сĕчĕ пурĕ талăкра 4 путылккă çурă тулаť. Ăна вĕсем виççĕн пĕр талăкра çапçут çисе йараççĕ те, чăкăт таврашсем тума ним те йулмасť. Чăкăт та çийес тесен, вĕсен тата миçе ĕне усрамалла пулаť? (Пĕр чăкăт тума 2 путăлккă çурă сĕт кирлĕ пулаť).

11. Шупашкартан Çĕрпӳве «Канаш» 3 сехетре çитет. «Канаш» Çĕрпӳрен Мăнçута (Çĕр. в.) çурран çынпа 3 сехетре çитме пултараť. Çĕрпӳрен çав «Канашах» йала, почтăпа 4 кун çурăра, 5 кунта, хăш чухне 7 кунта çитет. Почтă çурран çынтан миçе хут хытăрак çӳрет?

Инвалитсен столовăйĕнче.

— Ну, Иван Петрович, есĕ тăрăшнипе столовăй илемĕ килнĕ иккен: кармуђ сасси, ташлу, тĕрлĕрен йурă сасси чуна савăнтарсах йараť.

— Ăна пĕлмесĕрех туманха, Ахванис мучи, çапла кармуђсемпе илĕртмесен сăра сахал кайаť, тупăш çителĕклĕ пулаймасť.

— Апла пулсан, унта пуç хĕрнĕ халăхсене илĕртме хĕрсем усрасан тата усăллă пулмĕши?

— Ун çинчен епĕ тахçанах шухăшланă, Ахванис мучи, анчах правленипе калаçса пăхманха. Куç.

ПОЧТĂ ЙЕШЧĔКĔ.

— Вĕркĕче (Шупашкар петтехнĕккăмĕ) самăконккă ĕçмен пупсене тупаймăн есĕ. Тупакана «Капкăн» хăйĕнчен 10 тенкĕ параť.

— Кунера. (Шĕнерпуç вул). Чăваш Туçари Йакур Правухĕ ашшĕне кăмака çинче пĕçертсе йарса вĕлересшĕн, тетĕн есĕ. Пиçсе вилес килмесен ашшĕн кăмаки çине улăхма йурамасť.

Чувашоблит № 1296. Чебоксары, Тип. Чувашиздата.